Ăсталăх

# Халăх пуянлăхĕ – чăваш тĕрринче

**Чăваш тĕрри – тăван халăхăн сĕм авалтан упранса çирĕпленнĕ ал ĕç йăли, унăн ăс-хакăл пуянлăхне, ĕçченлĕхне сăнарлакан мул. Аваллăха лайăххăрах ăнланас тесен хамăр несĕлсен пурнăç тымарĕсене тĕпчемелле, упрама вĕренмелле. Сăмах-юмах ламран лама куçать, хут çине çырни ĕмĕр-ĕмĕр упранать. Ку енĕпе тĕпчев ĕçĕсем, кĕнекесем пичетлесе кăларни, документлă тата илемлĕ фильмсем ӳкерсе халăх патне çитерни пысăк пĕлтерĕшлĕ.**




Раççейри халăхсен пурнăç йĕркине тĕпчесси XVIII ĕмĕр варринчех пуçланнă. Çул çӳревçĕ тĕпчевçĕсем чăваш тĕрри, хĕрарăмсен эрешлĕ тумĕ çинчен çырса хăварни те пур. Раççейĕн ăслăлăх академикĕсем Г.Миллер, И.Лепехин, П.Паллас Атăл тăрăхĕнче пулса хĕрарăмсемпе хĕрсен кĕмĕлпе тата вĕтĕ шăрçапа илемлетнĕ пуçа тăхăнмалли, кăкăр умне, çурăм хыçне çакмалли хатĕрсене, тĕрлĕ тумтире тĕпченĕ, ĕлĕкхи чăваш тĕрринче çырулăх пулнине те çирĕплетсе панă.

1828 çулта Шупашкарта Н.Никольский профессорăн «Краткий курс этнографии чуваш» кĕнеки тухнă. Тăван халăхăн историйĕнче ку – чăваш ӳнерĕ çинчен çырса кăлартнă кĕнеке те. Халĕ ăна профессор çырнисен пуххин пĕрремĕш томĕнче тупса вулама пулать. Пурин çинчен те каласа кăтартас тесе хыпаланнăскер хăй çырнисене ӳкерчĕксемпе ăнлантарнă. Çак монографи паянхи кун та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман.

Н.Никольский фондĕнче упранакан ал çырусен хушшинче халăх сăмахлăхĕн пĕр тĕслĕхĕ вырăн тупнă (329 т., 390 с.(. Унта çакăн пек йĕркесем пур:

Пир-авăра тăвакан,
Тĕрĕ-çĕвĕ пĕлекен
Кĕтерине çитес хĕр
Пирĕн ялта пулман та.

Чăвашăн тĕрĕ ăсталăхĕ темиçе çĕр çуллăх витĕр тухнă, ламран лама куçса аталанса пырса XX ĕмĕре кĕнĕ. Чăваш наци вулавăшĕн сентрисем çинче халăх тĕрри çинчен XX ĕмĕр пуçламăшĕнче пичетленнĕ ĕçсенчен пуçласа паянхи кунччен кун çути курнисем таранах тирпейлĕн упранаççĕ. Чăваш Республикин наци библиотеки кăçал, кăрлач уйăхĕн 21-мĕшĕнче, 150 çул тултарчĕ. Çак вăхăтра вулавăшăн тĕп тĕллевĕ улшăнман – кĕнеке урлă çут ĕçпе культурăна сарасси. Паян вăл пурте усă курма пултаракан библиотека кăна мар, патшалăх шайĕнче кĕнеке упракан тĕп учреждени те, ăслăлăхпа тĕпчев ĕçĕсен центрĕ те. Çавăн пекех Чăваш Енри тата ун тулашĕнчи чăвашсемпе ĕçлекен библиотекăсен методика центрĕ те. Ӳнер литературин пайĕнче, Кĕнеке палатинче, Чăваш кĕнеки центрĕнче Моисей Спиридонов, Татьяна Акимова, Дмитрий Архангельский, Нина Гаген-Торн, Никита Воронов, Геннадий Иванов-Орков, Алексей Трофимов тата ытти тĕпчевçĕн ĕçĕсемпе паллашма пулать.

Кашни тĕрĕçĕн – хăйĕн вăрттăнлăхĕ, майĕ, йĕрки. Çапла майпа вун-вун çĕнĕ эреш çуралать. Тĕрĕ – пурнăç хăйне евĕрлĕхĕ те, çут çанталăк илемĕ те, тĕкĕрĕ те. Вăл ăстан кăмăл-туйăмне те, ĕмĕт-тĕллевне те сăнлать. Чăваш халăх ăстисем несĕлĕмĕрсен ӳнерне упраççĕ кăна мар, малалла та аталантараççĕ. Шăпах çакна ĕнентереççĕ те Атнер Хусанкайпа Алексей Трофимов пухса хатĕрленĕ «Три солнца Татьяны Шарковой» кĕнеке каталогĕ, Моисей Спиридововăн «Чăваш эрешĕ» /Чувашский орнамент/, Евгения Жачевăн «Чăваш тĕрри: техника, меслетсем» /Чувашская вышивка: техника, приемы/, Зинаида Вороновăн «Чувашские национальные головные уборы и украшения», Геннадий Иванов-Орковăн «Золотая игла Марии Симаковой» тата «Узоры, цвет, символика. Народное искусство и художественные промыслы современной Чувашии», Валентина Минеевăн «Чăвашсен эрешлĕ пир-авăрĕ» /Чувашское узорное ткачество/ кĕнеке альбомсем, «Зинаида Вороновăн пуканисен тĕнчи» ĕç тата ытти те. Асăннă кăларăмсем урлă эреш тĕнчине тишкерме ансат. Чăваш шупăрĕ, кĕпе умĕ, сурпан, хĕр пĕркенчĕкĕ, арçын кĕпи, çанă, кĕрӳ тутри… тĕррисем – пурне те асăнса та çитереймĕн. Кĕнекери ӳкерчĕксене пăхса ĕçе пуçăнма çăмăл.

Çавăн пекех Екатерина Ефремова тĕрĕçе халалланă «Тĕрĕ ăсти Екатерина Ефремова» ятлă хулăнах мар кĕнекене те палăртса хăвармалла. Унăн авторĕ – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, пичет ветеранĕ Валентина Минеева. Екатерина Иосифовна, вышкайсăр пултаруллă та тĕлĕнмелле ăста хĕрарăм, чăваш тĕррине çĕнĕ пурнăç парнеленĕ, ăна тĕнче умне мĕн пур илемĕпе кăларнă. Ахальтен мар Чăваш тĕррин кунне чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче уявлаççĕ. Çак кун 1914 çулта халăх ӳнерне пысăк тӳпе хывнă тĕрĕ художникĕ Екатерина Ефремова çуралнă. «Тĕрĕ ăсти Екатерина Ефремова» кĕнеке Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн типографийĕнче кун çути курнă. Вăл нумай сийлĕ хайлав: аса илӳ те, тĕпчев те, çырусен тишкерĕвĕ те пур. Авторпа Екатерина Ефремова чылай çул туслă пулнă, чуна уçса сахал мар калаçнă, пĕр-пĕрне хавхалантарма тăрăшнă.

Чăваш тĕррине халалланă электронлă кăларăмсене те асăнса хăвармалла. Вĕсен хушшинче: Владимир Галошевăн «Çын пĕлмен тĕрĕ /Ухмах тĕрĕ/», «Чăваш тĕррин илемĕ», «Звенящее серебро тухьи» тата ыттисем те. 2020 çулта Чăваш тĕррин кунне халалласа Чăваш наци вулавăшĕ «Чăваш тĕррин илемĕ» /Искусство чувашской вышивки/ ятлă виртуаллă проект хатĕрлерĕ. Электронлă кăларăмăн тĕп тĕллевĕ – вулакансене чăваш халăхĕн авалхи ӳнерĕпе паллаштарасси, чăваш тĕррин пуян историне çухатса паракан документсемпе материалсене пĕр çĕре пустарса халăх патне çитересси, упраса хăварасси.

Ĕмĕрсем иртеççĕ пулсан та чăваш тĕррин илемĕ пире паянхи кун та илĕртет. Чăваш халăхĕн ӳнер ăсталăхĕ тишкерсе пĕтерме çук анлă та пуян. Чăвашăн çи-пуçĕ тĕреллĕ, савăт-сапи эрешлĕ пулнă. Çавăнпа-ши вăл пĕтĕм тĕнчене тĕреллĕ курнă? Сăмах ăстисен хайлавĕсене вулатăн та чăваш тĕнчи мĕн тери эрешлĕ пулнине тата туллинрех куратăн. Сар хĕвел тĕрĕ тĕрлеме пултарнине кам кăна сăнаман пуль: Ивник, Тукташ, Уйăп Мишши, Шавли... Хĕвелĕн тĕрлес ăсталăхне Кĕçтенттин Иванов пуринчен те маларах палăртнă:

Çырма юхать кĕрлесе
Аслă ялăн çумĕпе.
Хĕвел тĕрĕ тĕрлесе
Вылять унăн шывĕпе…

**Вера АРХИПОВА.**